# ЗАДАНИЯ ЗАКЛЮЧИТЕЛЬНОГО ЭТАПА СЕВЕРО-ВОСТОЧНОЙ ОЛИМПИАДЫ ШКОЛЬНИКОВ ПО РОДНЫМ ЯЗЫКАМ (ПРОФИЛЬ — «РОДНОЙ (ЧУВАШСКИЙ) ЯЗЫК И ЛИТЕРАТУРА») 2022–2023 УЧЕБНЫЙ ГОД

## 10–11 КЛАССЫ

## ИНСТРУКЦИЯ ПО ВЫПОЛНЕНИЮ ОЛИМПИАДНЫХ ЗАДАНИЙ

Олимпиадная работа состоит из 10 заданий по чувашскому языку и литературе.

Внимательно читайте указания, относящиеся к правилам выполнения каждого задания.

Задания 1 — 6 представляют собой различные виды работы по фонетике, лексикологии и грамматике на основе поэтического и прозаического текстов.

Задание 7 предполагает написание эссе по проблематике прозаического текста объемом 10 — 15 предложений на родном языке. В эссе формулируется рассматриваемая проблема, дается комментарий с опорой на исходный текст, выражается собственная позиция по указанной проблеме. Работа должна характеризоваться смысловой цельностью, связностью и последовательностью изложения, не содержать ошибок.

Задание 8 предполагает выполнение перевода с русского языка на родной.

Задание 9 предполагает работу с изобразительно-выразительными средствами на основе поэтического текста.

Задание 10 предполагает целостный анализ прозаического произведения, написанного на родном языке, по семи заданным критериям. Ваша работа должна представлять собой цельный, связный, завершённый текст на родном языке.

На выполнение олимпиадной работы отводится 3 часа 55 минут (235 минут).

Каждое задание оценивается соответствующим баллом. Баллы, полученные Вами за выполненные задания, суммируются. Постарайтесь выполнить как можно больше заданий и набрать наибольшее количество баллов. После завершения работы проверьте, чтобы ответ на каждое задание в бланках ответов был пронумерован в соответствии с номером задания.

Все бланки заполняются ручками с синими или чёрными чернилами. Допускается использование гелевой ручки. При выполнении заданий можно пользоваться черновиком. Записи в черновике, а также в тексте олимпиадных материалов не учитываются при оценивании работы. Пишите аккуратно, разборчивым почерком.

Желаем успеха!

# ШКУЛ АЧИСЕН 2022–2023-МĔШ ВĔРЕНӲ ÇУЛĔНЧЕ ТĂВАН ЧĔЛХЕПЕ ИРТТЕРЕКЕН ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛ ТУХĂÇ ОЛИМПИАДИН ПĔТĔМЛЕТӲ ТАПХĂРĔ

## 10–11-МĔШ КЛАСС

## ОЛИМПИАДА ĔÇНЕ ПУРНĂÇЛАС ЙĔРКЕНЕ ĂНЛАНТАРСА ПАНИ

Олимпиадăн юлашки тапхăрĕнче чăваш чĕлхипе тата литературипе çыхăннă вунă ĕç пурнăçламаллла. Малтанах ĕç тĕллевне тимлĕ вуласа тухăр.

1 — 6-мĕш ĕç фонетикăпа, лексикологипе тата грамматикăпа çыхăннă, тĕпрен илсен илемлĕ хайлав никĕсĕ çинче.

7-мĕш ĕçе эссе çырса пурнăçламалла. Унта чăвашла çырнă 10–15 предложени пулма кирлĕ. Эссере никĕс хальлĕн суйласа илнĕ хайлав тăрăх унăн проблематикине уçса памалла, ун пирки хăвăр шухăшăра пĕлтермелле. Эсир çырнă тишкерӳ сыпăнуллă пĕр пĕтĕмĕшле текст пулса тухма тивĕç, йăнăш пулмалла мар.

8-мӗш ӗçе вырӑсларан чӑвашла куçарассине халалланӑ.

9-мӗш ӗç сӑвӑра тӗл пулакан илемлӗх мелӗсене хаклассипе çыхӑннӑ.

10-мӗш ӗç проза хайлавне çичӗ ыйтӑва хуравласа тишкерес пулать. Эсир çырнӑ тишкерӳ сыпӑнуллӑ пӗр пӗтӗмӗшле текст пулса тухма тивӗç.

Мӗн пур ӗçе пурнӑçлама виçӗ сехет те 55 минут (235 минут) параççӗ.

Кашни ӗçе балл лартса хаклаççӗ. 1–8 ӗçшӗн чи нумаййи 40 илме май пур. 9–10-мӗш ӗçшӗн 30-шар балл çӗнсе илме пулать. Юлашкинчен мӗн пур бала суммӑлаççӗ.

Ытларах ӗç пурнӑçлама тӑрӑшӑр, çапла майпа эсир нумайрах балл пухма пултаратӑр.

Вӗçленӗ хыççӑн кашни ӗç номерне тӗрӗслесе илӗр: унӑн сире сӗннӗ ӗçӗннипе пӗре килмелле.

Ӗçе кӑвак е хура тӗслӗ ручкӑпа çырма пултаратӑр. Гель ручка та юрӑхлӑ. Черновикпа усӑ курма ирӗк пур. Анчах ӗçе хакланӑ чухне унта çырнине шута илмеççӗ. Типтерлӗ çырӑр!

Ӑнӑçу сунатпӑр!

**1-мӗш ӗç.** Хӑвӑр суйласа илнӗ икӗ ваттисен сӑмахне транскрипци тӑвӑр.

**Чи нумаййи — 4 балл.**

**Задание 1.** Подберите на родном языке две пословицы и дайте их звуковую транскрипцию.

**Максимальный балл — 4.**

**II. Эйзин çырнӑ «Хӗвеле хупларӗ…» сӑвва вуласа тухӑр та 2–4-мӗш ӗçе пурнӑçлӑр.**

Хӗвеле хупларӗ
хуп-хура пӗлӗт.

Тунсӑхӑма ниçта хума пӗлмесӗр
пӗве хӗррине
пырса тухрӑм эп.

Инçех те мар
шап-шурӑ чул выртать,
чӗрӗ пекех мана
куçран пӑхать.

Ӑна,
ӑшӑскере,
алла илетӗп,
ачашлатӑп,
чӗрем çумне тытса
татах та ачашлатӑп,
вара
пӗве варринелле
вӑркӑнтаратӑп.

Пӗве çине
вӑр çавра хум тухать.
Ман шурӑ чул
пӗве тӗпне путать.

Сивӗ пуль пӗве тӗпӗнче.
Тӗттӗм пуль

пĕве тĕпĕнче.

Чулăм ăшăттăр
унти сивлеклĕхе,
Кăштах çутаттăр
унти тĕттĕмлĕхе.

Пулă пырса
чуп тутăр ăна.
Уйăх çӳлтен
сăнатăр ăна.

**Прочитайте стихотворение П. Эйзина «Покрыло солнце…». Выполните задания 2–4 по тексту стихотворения.**

**2-мĕш ĕç.** *Хуплареĕ, тунсăхăма, ăшăскере* сăмахсен тытăмне тишкерĕр, морфемисене тивĕçлĕ паллăпа уйăрăр. Çак сăмахсем предложенин хăш членĕ пулаççĕ? Вĕсем хăш сăмахпа çыхăнура тăраççĕ?

**Чи нумайĳи — 6 балл.**

**Задание 2.** Разберите по составу следующие слова из приведенного выше стихотворения: *хупларĕ* ‘покрыло’, *тунсăхăма* ‘мою грусть’, *ăшăскере* ‘того, кто тепл’, обозначьте морфемы соответствующими знаками. Определите, какими членами предложения они являются и с какими словами связаны.

**Максимальный балл — 6.**

**3-мĕш ĕç.** Сăввăн аяларах илсе панă çаврине кĕрекен сăмахсен антонимне май пур таран тупса палăртăр.

Инçех те мар
шап-шурă чул выртать,
чĕрĕ пекех мана
куçран пăхать.

Ăна,
ăшăскере,
алла илетĕп,
ачашлатăп,

**Чи нумайĳи — 5 балл.**

**Задание 3.** Подберите все возможные антонимы к словам из второй строфы стихотворения.

**Максимальный балл — 5.**

**4-мĕш ĕç.** *Ачашлатăп, тĕпĕнче, тĕттĕмлĕхе, варринелле, вăркăнтаратăп, алла* сăмахсен морфема тытăмне уçса парăр, вĕсене çиелтен кирлĕ паллăсемпе уйăрса тухăр, пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах пулнине палăртса икĕ ушкăна уйăрăр.

**Чи нумайĳи — 5 балл.**

**Задание 4.** Определите морфемный состав следующих слов из стихотворения: *ачашлатăп* ‘глажу’, *тĕпĕнче* ‘на дне’, *тĕттĕмлĕхе* ‘в темень’, *варринелле* ‘в сторону центра’, *вăркăнтаратăп* ‘бросаю’, *алла* ‘в руку’. Обозначьте морфемы соответствующими знаками.

**Максимальный балл — 5.**

**Тани Юнăн «Иртнĕ кунсем-çулсем» кĕнекин сыпăкне вуласа тухăр та 5–7 ĕçе пурнăçлăр.**

Етĕрнере вĕреннĕ чух хам пурнăçра пĕрремĕш спектакль куртăм. Шкулти драмкружок Николай Мордвинов ертсе пынипе Леонид Андреевăн «Пирĕн пурнăç курĕсем» драмине лартса пачĕ. Мордвинов хăй Онуфрий студент рольне вылярĕ, Коля рольне — Прытков, Ольăна — Мордвинов йăмăкĕ. Çак спектакле темиçе хут та кăтартрĕç. Ăна курма эпĕ кашнинчех çӳреттĕм. Тӳррипе каласан аташмах тытăнтăм: çав тери сцена çинче выляс килекен пулчĕ!..

Юлашки класа куçсан уесри çутĕç пайĕ чăваш ачисене вĕренсе тухасса кĕтмесĕрех ялти шкулсене ячĕ. Эпĕ кӳршĕри Палтая лекрĕм, унта ĕçлеме тытăнтăм.

Ман пуçран çаплах Етĕрнери спектакльсем тухмаççĕ. «Пĕрре те пулин сцена çинче выляса курасчĕ», — тесе çӳретĕп. «Выляма пултарăп-ши?» — иккĕленетĕп тата çавăнтах.

Пĕррехинче хам асап çинчен вулăсри парти организаторне Герасимов юлташа каласа патăм. Чăвашла спектакль лартма май çук-ши, вылякан кунта çителĕклĕ терĕм.

– Тытăнса пăхар, — ырларĕ ман шухăша Георгий Герасимович, Атликасси каччи.

Вăл ĕçе вăраха ямасăр чăваш драматургĕ Георгий Ефремов çырнă «Пуян Карук» пьесăна таçтан шыраса тупрĕ те мана вулама пачĕ.

Тепĕр куннех роль валеçрĕмĕр. Унтан Георгий Герасимович пьесăра вылякансене халăх çуртне пухрĕ те хĕрӳ ĕç пуçланчĕ. Репетицисем хыççăн хамăрах шпалерăн тӳнтер енĕ çине афиша çыртăмăр, декораци хатĕрлерĕмĕр.

Тинех ĕмĕтленнĕ кун çитрĕ. Спектакль пуçланиччен сцена çине тухса чаршава кăшт уçса пăхрăм та алă-ура чĕтреме пуçларĕ.

«Ай-юй! Халăх лăк тулли! Малти ретре ман аттепе анне, шăллăм ларать. Ах, ăçта кайса кĕрес?» — сивĕ тытнă пек чĕтрерĕм хам. Каласан та ĕненмĕр.

Çавăнтах пирĕн режиссер шăнкăрав йăтса сцена çине тухрĕ.

– Эсĕ мĕн кунта чĕтресе тăратăн? Ху артистка пулма ĕмĕтленетĕн тата… — терĕ вăл шăнкăравне суллана май.

«Чăнах та, мĕншĕн чĕтретĕп-ха? Рольне пĕлетĕп, мĕнле сăнарне те туятăп. Татьяна, артистка пулсан тетĕн пулсан алла их хăвна!» — тесе хама хам лăплантарма тăрăшрăм та сцена хыçне тухса тăтăм. Мĕн пулать те мĕн килет.

Спектакль пуçланчĕ. Вылянăçемĕн ман сехре хăпни йăлтах иртсе кайрĕ. Хамăр та спектакль аван пынине туятпăр, анчах куракансем темшĕн алă çупмаççĕ.

Спектакль пĕтрĕ. Вылякансем пурте сцена çинче кĕпĕрленсе тăчĕç, халăха килĕшмерĕ курăнать эпир выляни тесе хурланатпăр.

Çапах та куракансем саланмаççĕ-ха.

– Питĕ лайăх вылярăр! — тесе сцена çине пирĕн режиссер тухрĕ. — Куракансем пурте ырлаççĕ.

– Ырлани пулать-и ку? Алă та çупмаççĕ вĕт! — шавласа илтĕмĕр эпир.

– Тăхтăр-ха, — терĕ Георгий Герасимович халăх енне çаврăнса. — Юлташсем! Килĕшрĕ-и сире спектакль?

– Килĕшрĕ, килĕшрĕ! Аван вылярĕç, — кăшкăрчĕç куракансем.

– Апла пулсан мĕншĕн алă çупмастăр? Хулара артистсене лайăх вылянăшăн алă çупса ырлаççĕ. Атьăр эпир те алă çупар.

Куракансем алă çупса ячĕç.

Ман шăллăм:

– Аки, аки! — тесе кăшкăрать.

Пуçланчĕ шав.

– Татах выляса парăр!

Хальччен спектакль курман халăх артистсене алă çупса ырламаллине те пĕлмен иккен…

Спектакль пĕтсен ман пата сцена хыçне чăваш чĕлхи учителĕ Федор Тимофеевич пычĕ.

– Эсĕ, ачам, чăн-чăн артистка пекех вылатăн-çке! Санран тăлмач çеç мар, артистка та пулма пултарать. Саламлатăп, саламлатăп, Бурашникова, — мухтарĕ учитель манăн алла чăмăртаса.

Федор Тимофеевич мана чăваш чĕлхи урокĕнче Андерсен юмахĕсене куçарма паратчĕ. Виçĕ юмах куçартăм. Эпĕ куçарнисене вăл ырлатчĕ. Эсĕ тăлмач пулатăнах тетчĕ. Халь вара авă артистка та пулатăн тет. Çакă ман ĕмĕте питĕ çунатлантарчĕ.

**Прочитайте отрывок из мемуаров Тани Юн «Дни прошедшие, дни минувшие». Выполните задания 5–7 по тексту.**

**5-мĕш ĕç.** Хайлаври çак пĕлтерĕшлĕ сăмах çаврăнăшне çырса илĕр:

1) пĕр-пĕр шухăш çинчен кăна шутлама тытăн
2) шикленме пăрах
3) хăра, шиклен
4) шухăш-кăмăла амалантарттар

**Чи нумаййи — 4 балл.**

**Задание 5.** Выпишите из представленного выше отрывка текста фразеологизмы со значениями:

1) начать думать об одной и той же идее
2) перестать бояться, начать доверять себе
3) бояться
4) поддержать мечту

**Максимальный балл — 4.**

**6-мĕш ĕç.** Хутлă предложени тĕсне палăртăр. Вăл миçе пайран тăрать? Пайĕсем мĕнле мелпе çыхăнаççĕ?

*Тӳррипе каласан аташмах тытăнтăм: çав тери сцена çинче выляс килекен пулчĕ!..*

**Задание 6.** Укажите вид сложного предложения, определите, из скольких частей оно состоит, назовите способы и средства связи между ними.

*Сказать по правде, я начала бредить: мне очень захотелось играть на сцене!..*

**Максимальный балл — 5.**

**7-мĕш ĕç.** Тани Юнăн «Иртнĕ кунсем-çулсем» кĕнекипе çыхăнтарса артист профессийĕ çинчен 10–15 предложенирен тăракан эссе çырăр. Чи малтанах эссе проблемине палăртăр, шухăшăра хайлаври тĕслĕхпе çирĕплетĕр. Эсир хăвăр кун пирки мĕн шутлатăр? Сирĕн эссе пĕр пĕтĕмĕшле çыхăнуллă текст пулса тухма тивĕç.

**Чи нумаййи — 15 балл.**

**Задание 7.** Напишите эссе из 10–15 предложений по произведению Тани Юн «Дни прошедшие, дни минувши» об актерской профессии. В эссе вы должны вначале сформулировать проблему. Опираясь на исходный текст, поясните это, приводя примеры. Выразите свою собственную позицию по указанной проблеме. Работа должна характеризоваться смысловой цельностью, связностью и последовательностью изложения, не содержать ошибок.

**Максимальный балл — 15.**

**8-мӗш ӗҫ.** Текста чӑвашла куҫарӑр. Кашни предложениех ӑнӑҫлӑ куҫарӑннине сӑнаса пырӑр.

**Чи нумайӑи — 30 балл.**

**Задание 8.** Переведите текст на чувашский язык. Обратите особое внимание на адекватность передачи содержания текста оригинала и правильность выбора формы выражения мысли на родном языке в каждом переведенном предложении.

## ВОЛК

Волк — это дикое животное. Живут они около десяти лет. Эти животные могут весить около 80 килограммов. Издалека волка можно перепутать с собакой. Но у него есть одно главное отличие — хвост. Он у волка всегда прямой и опущен книзу. Волк в отличие от собаки суров. Живут волки обычно семьей, а зимой объединяются в большие стаи. А с приходом весны эти стаи распадаются. Охотятся волки как на крупных животных, таких как кабан, косуля, так и мелких, например, зайцев, мышей. К сожалению, в настоящее время волки находятся под угрозой исчезновения, так как их уничтожают во время охоты, либо при защите домашнего скота. Но необходимо помнить о том, что волк является самым главным санитаром природы. Он убивает больных и умирающих животных. Лишив жизни волка, человек рискует погибнуть сам. Давайте беречь живую природу и ее обитателей!

**Максимальный балл — 30.**

**9-мӗш ӗҫ.** Петр Хусанкай сӑввине вуласа тухӑр та илемлӗх мелӗсене ҫырса илӗр, вӗсене тивӗҫлӗ терминпа палӑртӑр тата мӗн тӗллевпе усӑ курнине ӑнлантарса парӑр.

**Чи нумайӑи — 6 балл.**

Эп, радиопа атом ӗмӗрне те
Ҫитсе кӗмешкӗн ӗлкӗрнӗ этем,
Чӗлхе тӑванлӑхне курасчӗ тетӗп:
Пӗрне-пӗри ӑнланччӑр халӑхсем.
Философӑн, поэтӑн е ҫулпуҫӑн
Сӑмахӗ ҫиттӗр пур илемӗпе,
Пур вӑйӗпе ҫиҫсе вылятӑр уҫҫӑн –
Хӗвел пек, ҫил пек, ҫумӑр пек, — теп эп.
Ҫапах та — хальлӗхе мӗн паллаштарчӗ
Мана ҫак ешӗл курӑкпа, ҫӗрпе?
Ҫак пӗлӗт ҫӳллӗшне мӗн ӑнлантарчӗ? –
Тӑван чӗлхе! Ҫав пулчӗ тӗкӗр пек.
Килте, ютра-и эп — кирек ӑҫта та,
Кирек хӑҫан та тав тӑвап ӑна:
Чӗлхем! Санпа тӗнче уҫҫи тытатӑп,
Шухӑшлама вӗрентрӗн эс мана.

В век радио и атомных открытий
Хотел бы я дожить до дней, когда
И языков связующие нити
Сплотят в одну семью людей труда.
Хотел бы я, чтоб речи доходили
Мыслителей, поэтов и вождей
В их первозданной красоте и силе,
Как свет лучей, шум ветра и дождей.
А что меня с землей, с травой зеленой,
С высоким небом, с клекотом орла
Знакомило, баюкая, с пеленок? –
Родная речь наставницей была.
Всегда, везде — в кругу привычном дома
Иль далеко от наших рубежей –
Я благодарен языку родному:
Он мне открыл мир мыслей и вещей.

**Задание 9.** Прочитайте стихотворение П. Хузангая на чувашском языке. Выпишите тропы и стилистические фигуры и укажите вид изобразительно-выразительного средства. Поясните, какую функцию выполняет каждый из них в лирическом произведении.

**Максимальный балл — 6.**

**10-мĕш ĕç.** И. Яковлев кĕнекинчен илнĕ «Тăманапа мулкач» калава аяларах илсе панă йĕркене тĕпе хурса тишкерĕр. Эсир хатĕрленĕ ĕç пĕр пĕтĕмĕшле çыхăнуллă текст пулса тухма тивĕç. Тишкерӳ калăпăшĕ — 200–250 сăмах.

## КАÇХИ СĂНСЕМ

Чӳрече умне пырса тăтăм та каç сĕмлĕхне тинкертĕм. Хура, сивĕ çара пĕлĕт. Хăйĕн тĕпсĕр тĕттĕмлĕхĕпе вăл хăрушшăн, асамлăн курăнать. Темĕскер илĕртсе пăхтарать ун çине. Пăхнăçемĕн чун çав хăрушă тĕттĕмлĕхелле туртăнать. Мĕн илĕртет мана унта? Анчах ытла çара ку пĕлĕт, пăхма та аван мар. Çак самантра завод мăрйинчен тухакан тĕтĕме куратăп. Вăл хура пĕлĕт çинче шап-шурă та илĕртӳллĕ. Çил ăна çавăрса илет те тĕрлĕ-тĕрлĕ кӳлепесем туса пĕлĕт тăрăх сапалать. Çут тĕнчере пурăннисен чунĕсем пек вĕсем шăппăн та çăмăллăн вĕçеççĕ çылăхлă çĕр çийĕн. Хам сисмесĕрех паллană сăнсене шырама пуçлатăп.

Ăнланмалла мар туйăм çавăрса илчĕ, теме кура пит хавас мана… такам култарать. Çак самантра темскер пĕчĕкленсе, мĕскĕнленсе юлать манра, анчах… тутасем кулаççĕ. Хупас тесен те хупаймастăп — асап. Хамăн çухатуран хам кулатăп пулинех. Хаваслă халь мана тĕттĕм те хăрушă пĕлĕт çине пăхма. Анчах ăçта кайса çухалчĕ паçăрхи чуна илĕретекен вăрттăнлăх?

Пушă та кичем…

Каçхи ыйăха çухатнăскер, чӳрече умĕнчи çăкана сăнарăм. Çĕрĕпе çăка хунар юпи çумне тĕршĕнчĕ: ыталарĕ, ачашларĕ, ун çутипе киленчĕ. Çав юпашăн çулçисемпе алă çупса ташларĕ, тем юрларĕ, шăппăн пăшăлтатрĕ: шĕпĕл-шĕпĕл… «Пăхсам, пăхсам ман çинелле», — тенĕн вуллисемпе хунар юпине çупăрларĕ, çупăрларĕ… Унтан, тем ăнланса илнĕн, сасартăках шапăртаттарса куççулĕ тăкрĕ. Ĕсĕклерĕ, ĕсĕклерĕ те ир енне кăтăш пулчĕ. Хунар юпи те çутине сӳнтерчĕ.

Çăкан чун вылянăвне никам та кураймарĕ, пĕр юпа кăна. Анчах вăл чунсăр. Мĕн усси унран?

Чӳречерен каçхи сĕмлĕхелле ан пăхсамăр. Эсир унта хăвăрăн çухатăвăсăр пуçне урăх нимĕн те кураймăр.

1. Хайлав теми, тĕп шухăшĕ, проблематики.
2. Автор хăй каласа паракан ĕç-пуçа мĕнлерех хакать?
3. Сюжет йĕрки (экспозици, пуçламăшĕ, ĕç-хĕл аталанăвĕ, кульминацийĕ, вĕçĕ).
4. Хайлаври геройсен тытăмĕ (тĕппи, иккĕмĕшли), вĕсен характеристики: кăмăлĕ, пĕр-пĕрин хушшинчи çыхăну, хăйне евĕрлĕхĕ е ахаль йышши пулни, пайăр герой сăнарĕ (пичĕ-куçĕ, пĕвĕ, тумтирĕ).
5. Мĕнле-мĕнле илемлĕх мелĕ хайлава хитрелетет? Вĕсен тĕллевĕ мĕнре?
6. Çак хайлавăн литература хутлăхĕнчи вырăнĕ.
7. Эсир ку хайлав пирки мĕн шутлатăр?

**Чи нумаййи — 20 балл.**

**Задание 10.** Выполните целостный анализ рассказа «Сова и заяц» из книги И. Яковлева на чувашском языке по предложенному плану. Ваша работа должна представлять собой цельный, связный, завершённый текст. Рекомендуемый объём — 200–250 слов.

## НОЧНЫЕ ОБРАЗЫ

Подойдя к окну, я посмотрел на тьму ночи. Черное, холодное пустое небо. Своей бездонной тьмой он выглядит страшно и волшебно. Что-то привлекает к нему внимание. С каждым взглядом душа устремляется в эту страшную тьму. Что меня там привлекает? Но слишком пустое это небо, и смотреть на него неприятно. В этот момент я вижу дым, идущий из заводской трубы. Он белый и привлекательный на черном небе. Ветер окружает его и разбрасывает по небу разноцветные клепки. Они тихо и легко летают над землей, как души людей, живущих на свете. Незаметно для себя начинаю искать знакомые лица.

Мне очень приятно, что меня охватило непонятное чувство. В этот момент что-то уменьшается во мне, но губы улыбаются. Закрыть не могу — мучительно. Я, наверное, смеюсь над своей потерей. Радостно мне теперь смотреть на темное и страшное небо. Но куда делась таинственность?

Пусто и скучно…

Потеряв ночной сон, я начал наблюдать липу перед окном. Всю ночь липа прижималась к фонарному столбу: обнималась, ласкалась, наслаждалась его светом. Она танцевала, хлопая в ладоши листьями для этого столба, что-то пела, тихо шептала: обнимала стволами фонарный столб со словами: «Посмотри, посмотри на меня», обнимала его, потом, как будто что-то осознав, вдруг хлопнула в ладоши и пролила слезы. Рыдала, рыдала и к утру успокоилась. Фонарный столб тоже погас.

Никто не видел волнение липы, только один столб. Но он бездушен. Какая от него польза?

Не заглядывайте в вечернюю тьму. Вы не увидите там ничего, кроме своих потерь.

1. Определите тему, идею и проблематику произведения.
2. Авторское отношение к событиям, героям и их поступкам.
3. Определите основные элементы сюжетной линии рассказа (экспозиция, завязка, развитие действия, кульминация, развязка).
4. Разделите образы персонажей рассказа (главные, второстепенные или эпизодические образы) и дайте им характеристику: характеры, взаимоотношения между персонажами, типичность или уникальность персонажей, своеобразие созданного образа человека: портрет (лицо, фигура, костюм).
5. Какие художественные средства и приёмы создают особый эмоциональный фон рассказа? И какую функцию они выполняют в произведении?
6. Определите место данного произведения среди произведений других авторов, написанных в этот период и дайте оценку произведения в контексте современного прочтения.
7. Выразите свое эмоционально-оценочное отношение к прочитанному.

**Максимальный балл — 20 баллов.**

## Система и критерии оценивания

| № задания | Правильные ответы | Критерии оценивания | Баллы |
|---|---|---|---|
| **Задание 1.** | Çиччĕ виç те пĕрре кас. ‘Семь раз отмерь, один раз отрежь’.<br>[çи́ч:ь в’и́ç т’э́ п’ър’:э́ ка́с].<br><br>Усал çынпа çула ан тух. ‘С плохим человеком в путь не отправляйся’.<br>[узáл çы$^{и}$нбá çулá áн дýх]. | **2 балла** — за пословицы (по 1 баллу за каждую).<br>**2 балла** — за правильное транскрибирование пословиц (по 1 баллу за каждую). | **4 балла** |
| **Задание 2.** | хупларĕ ‘покрыло’ — хуп(ă)-ла-рĕ:<br>*хуп(ă)* — корень;<br>*-ла* — словообразовательный аффикс;<br>*-рĕ* — словоизменительный аффикс 3 лица, единственного числа, прошедшего времени.<br>Слово выполняет синтаксическую функцию сказуемого, связано со словами *хĕвеле* ‘солнце’ (в дательном падеже), *пĕлĕт* ‘облако’.<br><br>*тунсăхăма* ‘мою печаль’ — тунсăх-ăм-а:<br>*тунсăх* — корень;<br>*-ăм* — словоизменительный аффикс категории принадлежности, 1 лица, единственного числа;<br>*-а* — словоизменительный аффикс дательного падежа.<br>Слово выполняет синтаксическую функцию дополнения, связано с *ниçта хума пĕлмесĕр.*<br><br>*ăшăскере* ‘того, который является теплым’ — ăшă-скер-е:<br>*ăшă*– корень;<br>*-скер* — словоизменительный аффикс выделительности;<br>*-е* — словоизменительный аффикс дательного падежа.<br>Слово выполняет синтаксическую функцию дополнения, связано с *ăна*. | **3 балла —** за правильный морфемный разбор слов (по 1 баллу за каждое слово). Если в морфемном анализе допущена ошибка, 1 балл за данное слово снимается;<br>**1,5 балла —** за правильное определение синтаксической функции (по 0,5 баллов за правильно определенную функцию одного слова).<br>**1,5 балла —** за правильное определение лексической единицы, с которым связано разбираемое слово (по 0,5 балла за правильный ответ). | **6 баллов** |
| **Задание 3.** | 1. Пара антонимов: *инçе — аякра.*<br>2. Пара антонимов: *шурă — хура.*<br>3. Пара антонимов: *чĕрĕ — вилĕ.*<br>4. Пара антонимов: *ăшă — сивĕ.* | **1 балл** — за каждую правильно приведенную пару синонимов или антонимов (их максимальное значение 5). | **5 баллов** |

| № задания | Правильные ответы | Критерии оценивания | Баллы |
|---|---|---|---|
| | 5. Пара антонимов: *ачашла — çап.* | | |
| **Задание 4.** | *ачашлатăп*<br>*тĕпĕ(н)че*<br>*тĕттĕмлĕхе*<br>*варринелле*<br>*вăркăнтаратăп*<br>*алла*<br><br>Группы:<br>1 группа — слова непроизводные: *тĕпĕнче, варринелле, алла;*<br>2 группа — слова производные: *ачашлатăп, тĕттĕмлĕхе, вăркăнтаратăп.* | **3 балла —** за правильно указанные способы образования слов (по 0,5 балла за слово).<br>**1 балл** — за правильно составленную группу непроизводных слов.<br>**1 балл** — за правильно составленную группу производных слов. | **5 баллов** |
| **Задание 5.** | 1. *пĕр-пĕр шухăш çинчен кăна шутлама тытăн — аташма тытăн;*<br>2. *шикленме пăрах — хăвна алла ил;*<br>3. *хăра — сехре хăп;*<br>4. *шухăш-кăмăла амалантар — ĕмĕте çунатлантар.* | **1 балл —** за каждый правильно указанный фразеологизм. | **4 балла** |
| **Задание 6.** | *Тӳррипе каласан аташмах тытăнтăм: çав тери сцена çинче выляс килекен пулчĕ!..*<br>– бессоюзное сложносочинённое предложение: первая часть — *Тӳррипе каласан аташмах тытăнтăм;* вторая часть — *çав тери сцена çинче выляс килекен пулчĕ.*<br>При этом первая часть осложнена вводным словосочетанием *тӳррипе каласан.*<br>Части предложения связаны между собой интонационно. | **2 балла —** за правильное определение вида сложного предложения.<br>**1 балл** — за правильное выделение частей сложносочинённого предложения.<br>**2 балла —** за правильное определение средств связи частей сложносочинённого предложения. | **5 баллов** |
| **Задание 7.** | Эссе о профессии артиста по мемуарам Тани Юн «Дни прошедшие, дни минувшие». | **2 балла** — проблема сформулирована верно;<br>**0 баллов** — сформулирована неверно или не сформулирована.<br>**3 балла** — имеется комментарий с опорой на исходный текст;<br>**2 балла** — имеется комментарий, но примеры из прочитанного текста не приведены;<br>**0 баллов** — комментарий с опорой на исходный текст отсутствует.<br>**3 балла** — отражена позиция автора по указанной проблеме; | **15 баллов** |

| № задания | Правильные ответы | Критерии оценивания | Баллы |
|---|---|---|---|
| | | **0 баллов** — позиция автора не сформулирована.<br>**3 балла** — работа характеризуется смысловой цельностью, связностью и последовательностью изложения;<br>**1 балл** — в работе просматривается коммуникативный замысел, но допущено более двух логических ошибок.<br>**4 балла** — орфографические, пунктуационные, грамматические и речевые нормы соблюдены;<br>**2 балла** — допущены 3–4 ошибки;<br>**0 баллов** — допущено 5 и более ошибок. | |
| **Задание 8.** | Перевод текста «Волк» на чувашский язык | Каждое из 15 переведенных предложений текста оценивается по двум критериям, предполагающим получение конкретного количества баллов:<br>**1 балл** — адекватная передача содержания предложения из текста оригинала средствами языка перевода.<br>**0 баллов** — в случае наличия серьезного отклонения от содержания оригинала или неадекватной передачи содержания;<br>**1 балл** — выбор правильной формы передачи мысли в предложении на языке перевода (грамотное изложение, отсутствие ошибок).<br>**0 баллов** — при неправильном выборе формы выражения мысли в предложении на языке перевода (наличии ошибок, допущении неточностей в формулировках на родном языке).<br>**0 баллов** — при непереведенном предложении. | **30 баллов** |
| **Задание 9.** | **Тропы:**<br>*чӗлхе тӑванлӑхӗ* – метафора, подразумевает единство языков;<br>*çиçсе вылятӑр* – олицетворение, как лучи солнца греют человека, так и язык пусть радует человека; | **Определение тропов и стилистических фигур.**<br>**3 балла —** учащийся выписал из текста все использованные в лирическом произведении тропы и стилистические фигуры.<br>**2 балла** — учащийся выписал из | **6 баллов** |

| № задания | Правильные ответы | Критерии оценивания | Баллы |
|---|---|---|---|
| | *хӗвел пек, ҫил пек, ҫумӑр пек* – сравнение, сравнивает родной язык со светом солнца, шумом ветра и дождя;<br>*тӗкӗр пек* – сравнение, родной язык сравнивает с отражением лирического героя;<br>*тӗнче уҫҫи* – метафора, родной язык открывает мир мыслей и вещей.<br>**Стилистическая фигура:**<br>*Тăван чĕлхе! Чĕлхем!* – риторические обращения, усиление выразительности речи, служат для выражения уважительного отношения к родному языку. | текста не все средства художественной выразительности.<br>**0 баллов** — учащийся не нашел в тексте ни одного средства выразительности.<br><br>**Пояснение тропов и стилистических фигур.**<br>**3 балла —** учащийся правильно пояснил, в чем заключается их суть каждого тропа или фигуры речи.<br>**2 балла** — учащийся смог пояснить суть не всех найденных в тексте художественных средств.<br>**0 баллов** — учащийся не пояснил суть найденных в тексте тропов и стилистических фигур. | |
| **Задание 10.** | 1. Определите тему, идею и проблематику данного произведения, объясните смысл названия рассказа. | **3 балла** — учащийся верно определяет тему, идею и проблематику произведения. Четко и ясно объясняет смысл названия произведения**.**<br>**2 балла** — учащийся верно определяет тему, идею и проблематику рассказа, но не смог объяснить смысл названия произведения.<br>**0 баллов** — **у**чащийся не может определить тему, идею и проблематику произведения, не может объяснить смысл названия произведения. | **20 баллов** |
| | 2. Авторское отношение к событиям, героям и их поступкам. | **3 балла** — учащийся показал понимание авторской позиции к событиям, героям и их поступкам**.**<br>**2 балла** — учащийся испытывает затруднения с анализом авторской позиции, есть 1–2 речевые и логические ошибки.<br>**0 баллов** — учащийся не смог сформулировать авторскую позицию. | |

| № задания | Правильные ответы | Критерии оценивания | Баллы |
|---|---|---|---|
| | 3. Определите основные элементы сюжетной линии рассказа (экспозиция, завязка, развитие действия, кульминация, развязка). | **3 балла** — логических ошибок в определении основных элементов сюжетной линии нет. Учащийся владеет литературоведческими понятиями и терминами. Речевые ошибки отсутствуют. Цитаты и отсылки к тексту уместны.<br>**2 балла** — допущена одна ошибка в определении основных элементов сюжетной линии. Цитаты и отсылки к тексту уместны.<br>**1 балл** — допущено более одной ошибки, учащийся допускает ошибки в использовании литературоведческих понятий. Цитаты и отсылки к тексту не всегда уместны.<br>**0 баллов** — сюжетная схема не определена и не описана. | |
| | 4. Разделите образы персонажей рассказа (главные, второстепенные или эпизодические образы) и дайте им характеристику: характеры, взаимоотношения между персонажами, типичность или уникальность персонажей, своеобразие созданного образа человека: портрет (лицо, фигура, костюм). | **3 балла** — дается достаточно полная характеристика героев, своеобразие их образов, особенности взаимоотношений раскрыты достаточно полно. Речевые и стилистические ошибки отсутствуют. Цитаты и отсылки к тексту уместны.<br>**2 балла** — дается достаточно полная характеристика героев, допущена речевая ошибка.<br>**1 балл** — характеристика действующих лиц слишком общая, характер взаимоотношений между героями прозаического произведения раскрыт недостаточно.<br>**0 баллов** — образы действующих лиц (главных) и взаимоотношения между героями вообще не описаны или описаны с большим количеством речевых ошибок. | |

| № задания | Правильные ответы | Критерии оценивания | Баллы |
|---|---|---|---|
| | 5. Какие художественные средства и приёмы создают особый эмоциональный фон рассказа? И какую функцию они выполняют в произведении? | **3 балла** — учащийся верно определяет вид художественных средств и демонстрирует умение объяснить их роль в раскрытии идейно-эстетического содержания произведения и создании особого эмоционального фона рассказа. Учащийся владеет навыками использования литературоведческих понятий и терминов.<br>**2 балла** — в работе недостаточно полно раскрыта роль художественных средств в создании эмоционального фона рассказа, допущена одна ошибка в определении вида художественного средства. Учащийся допустил ошибку в употреблении литературоведческих понятий и терминов.<br>**0 баллов — у**чащийся не смог объяснить роль художественных средств в раскрытии идейно-эстетического содержания произведения и создании особого эмоционального фона рассказа. Учащийся не владеет литературоведческими понятиями и терминами. | |
| | 6. Определите место данного произведения среди произведений других авторов, написанных в этот период и дайте оценку произведения в контексте современного прочтения. | **2 балла** — учащийся показал знание историко-литературного контекста: использует литературно-исторические факты и фоновый материал из области культуры и литературы, отсутствуют фактические ошибки.<br>**1 балл** — учащийся недостаточно хорошо знает историко-литературный контекст, допускает одну или две фактические ошибки.<br>**0 баллов** — учащийся не может интерпретировать произведение в литературно-историческом контексте. | |

| № задания | Правильные ответы | Критерии оценивания | Баллы |
|---|---|---|---|
| | 7. Выразите свое эмоционально-оценочное отношение к прочитанному. | **3 балла** — учащийся демонстрирует умение выражать свои мысли, чувства и давать оценку прочитанному, отсутствуют речевые ошибки**.**<br>2 балла — учащийся достаточно хорошо выражает эмоционально-оценочное отношение к прочитанному, но допускает одну или две речевые ошибки в содержании ответа.<br>0 баллов — учащийся не может выразить эмоционально-оценочное отношение к прочитанному. | |

**Максимальный балл за всю работу (задания 1–10) — 100**